# Çич çăлтăртан чи çутти

1.

*Çӳл тӳпере çич çăлтăр,*
*Çич çăлтăр та çут çăлтăр,*
*Çич çăлтăртан чи çутти*
*Элкер çăлтăр тесеччĕ.*

*Чăвашра поэт нумай,*
*Кашни поэт – çут çăлтăр,*
*Поэтсенчен чи чапли*
*Пирĕн Элкер пичченчĕ...*

Çапла çырнăччĕ эпĕ хам кун кĕнекине тасаран та таса кăмăллă, ырăран та ырă чĕрелле Семен Васильевич Элкер пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайсассăн.

Унтанпа 43 çул çитет.

С.В.Элкере Шупашкара вĕренме килсен, çамрăк çыравçăсен съездĕнче пуçласа курнăччĕ. Ун чухне Чăваш АССР Писательсен союзĕн председательне А.Ф.Талвира суйланăччĕ. Союзра çамрăк çыравçăсене чи хаклă çынсем пек кĕтсе илетчĕç. Вĕсене хавхалантарма ятарласа съезд ирттерессĕ! Вăл Советсен çурчĕн Аслă залĕнче пулчĕ.

Лайăх ас тăватăп: С.В.Элкер малти ретре ларать. Эпир, çамрăксем, шур сухалсем çине тĕлĕнсе пăхатпăр, вĕсен кашни сăмахне тимлесе итлетпĕр. Те вăхăтра сăмах паманнипе – В.Урташ кăшкăрашма тытăнчĕ. Сасси вăйлăччĕ унăн. Съезда ертсе пыракансем Урташа чарас тесе апла та, капла та калаççĕ. Çук, итлемест çакскер. Вара С.В.Элкер туйи çине таянса тăчĕ те ун патне уксахласа пычĕ. Шăппăн кăна темиçе сăмах каларĕ.

– Юрĕ, юрĕ, – терĕ Валентин, урăх пĕр сăмах каламасăр залран тухса кайрĕ.

Акă мĕнле пысăк хисепречĕ Семен Васильевич. Ун умĕнче эпир кăна мар, çитĕнсе çитнĕ, писатель ятне илнĕ çыравçăсем те шăппăн, яланах йĕркеллĕн калаçатчĕç.

2.

Эпир, темиçе студент, Ярославль урамĕнчен тухăçалла, Хайпăлкка шывĕ еннелле кĕрсе каякан пысăк мар тăкăрлăкри йывăç çуртра пурăнаттăмăр.

Тăкăрлăкран Ярославль урамне тухса çул урлă каççан уйрăм йывăç çурт пурчĕ. "Элкер çурчĕ", – тетчĕç ăна пĕлекенсем.

Чăнах та, эпир çав çурт таврашĕнче васкамасăр утса çӳрекен Семен Васильевича темиçе те курнă. Анчах патне пырса калаçу пуçлама вăтанаттăмăр.

3.

Семен Васильевичпа пĕрремĕш хут калаçасси 1958 çулта пулчĕ. Питĕ хытă тапăнчĕç çавăн чухне пуçлăхсем А.Ф.Талвира. Çитменнине тата инкекĕ те тупăнчĕ. Алексей Филипповича пулăшас, ăна хӳтĕлес тесе пуçлăхсем патне çыру çыртăмăр. Хамăр кăна мар, ятлă-сумлă çынсене те алă пустарас терĕмĕр.

Чи малтан кам патне каяс? Паллах, А.Ф.Талвирăн мĕн çамрăкран çывăх юлташĕ пулнă, Мускавра та пĕрле вĕреннĕ, пĕрле ĕçленĕ Чăваш халăх поэчĕ пире çак ĕçре пулăшмалла ĕнтĕ. Ăна халăх поэчĕ ят парас тĕлĕшпе Алексей Филиппович питĕ тăрăшнине те пĕлетпĕр.

Анчах эпир кайнă поэт хăй юлташне пулăшма килĕшмерĕ.

– Юрамасть! Обкома хирĕç каймалла мар! – терĕ вăл тарăхса.

"Мĕн тумалла?" – аптраса ӳкрĕмĕр эпир. Чылайччен шухăшланă хыççăн С.В.Элкер патне каяс терĕмĕр.

Семен Васильевич пирĕн çырăва вуласа тухрĕ те тӳрех: "Инкеке лекнĕ юлташа пулăшас пулать", – терĕ. Алă пусрĕ те А.Алка патне шăнкăравларĕ, пире пулăшма ыйтрĕ.

Пирĕн çыру айне вара А.Алка та, паллă ытти çыравçă та алă пусрĕç.

Çавăнтанпа эпир Семен Васильевичпа туслашса кайрăмăр.

1956 çулта эпĕ Куславккари фургон тăвакансен завочĕн пионер лагерĕнче вожатăйра ĕçленĕччĕ. Ман отрядра Семен Васильевичăн ывăлĕ Петя та пулчĕ. Çакă та пире унпа тата ытларах çывăхланма пулăшрĕ.

4.

Семен Васильевич мана хăйĕн ывăлĕ пекех куратчĕ. Хула урамĕсем тăрăх васкамасăр утса çӳренĕ май мĕн çинчен кăна калаçман! Манăн "Элпи чечекĕсем" кĕнеке ăна питĕ килĕшетчĕ. Эпĕ чăваш халăх историне, халăх пултарулăхне тĕпченишĕн, аваллăх халапĕсене пуçтарнишĕн питĕ савăнатчĕ. Семен Васильевич тăван халăха, тăван чĕлхене чун-чĕрипе юрататчĕ. Çаксем çинчен эпĕ хăй вăхăтĕнче "Имена улиц твоих, Чебоксары" кĕнекере, "Улица звездного человека" тата "Янка Купала в Чебоксарах" очерксенче тĕплĕн çырса кăтартнă. Белоруссен аслă та чаплă поэчĕпе Янка Купалăпа Семен Васильевич 1939 çулта Мускавра паллашса туслашнă. Ун чухне эрменсен "Сасун Давичĕ" эпосĕ пин çул тултарнине уявлама Совет Союзĕпех хатĕрленнĕ. Чи пысăк уявĕ Ереванра иртмелле пулнă. С.В.Элкерпе Янка Купала Мускавран Еревана пĕрле кайнă, питĕ çывăх туссем пулса тăнă. 1941 çулта вара, фашистсем пирĕн çĕршыв çине тискеррĕн кĕрсе кайсан, Янка Купала хăйĕн тусĕ патне Шупашкара килнĕ. Семен Васильевич ăна тăванĕ пекех кĕтсе илнĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн аллăмĕш çулĕсен вĕçĕнчен пуçласа чăваш чĕлхине хĕсме пуçларĕç. Ачасене пĕрремĕш класранах вырăсла вĕрентме тытăнчĕç. С.В.Элкер тăван чĕлхене хӳтĕлесе парти обкомне пысăк çыру çырчĕ. Çавăн хыççăн хаçат-журналта Семен Васильевич хайлавĕсене пичетлеме мар, унăн ятне асăнма та чарнăччĕ. Çакă пире, çамрăк çыравçăсене, питĕ тĕлĕнтернĕччĕ.

5.

1964 çул. Эпир мăшăрпа Шупашкарти 6-мĕш шкулта ĕçлеттĕмĕр. Пĕтĕм çемьепех, икĕ ачапа, шкул çуртĕнчех пурăнаттăмăр. Унтан та хуса кăларма тытăнчĕç. Нимĕн тума çуккипе обкома кайса пăхас терĕм. Обкомăн пĕрремĕш секретарĕ С.М.Ислюков йышăнчĕ, пулăшма пулчĕ. Ун патĕнчен тухрăм та виççĕмĕш хутран анатăп. Туйи çине йывăррăн пусса Семен Васильевич хăпарать.

– Хуçапа калаçса пăхас терĕм. Эпĕ çырнă хайлавсене вĕренӳ кĕнекисенчен те кăларса пăрахма тытăннă, – тет.

Семен Васильевич Советсен çуртĕнчен тухасса кĕтетĕп. Ислюков мĕн каланине пĕлес килет. Чылайччен утса çӳрерĕм, çапах та кĕтсе илтĕмех. Семен Васильевич кăмăллă.

– Эх, Мишша, ачам, – терĕ çавăн чухне Семен Васильевич, – тăван чĕлхене те хӳтĕлеме пĕлмелле çав. Чĕнмесĕр тăрсассăн пĕтерессĕ кăна мар, хăвна та ним юлми таптаса каяççĕ. Хуçана ĕнентертĕм пек-ха. Кăмăллах калаçрĕ. Ара, чĕлхе пĕтсен кам пулса юлатпăр-ха эпир?.. Тăван чĕлхине çухатнă халăх вăл сурăх кĕтĕвĕ пекех!..

Семен Васильевича килне çитиех ăсатса ятăм.

6.

Вăрçă хыççăн пирĕн ялта, Сăкăтра, Ентимер урамĕн вĕçĕнче çĕр чавса тунă пӳртре аманса-сусăрланса пĕтнĕ пĕччен çын пурăнатчĕ. Мĕнле килсе лекнĕ вăл пирĕн яла, халĕ ас тумастăп. "Упакасси" тесе чĕнетчĕç ăна çынсем.

Вăл чăнах та Упакассинче çуралса ӳснĕ-мĕн.

"Упакасси – Элкер ялĕ!" – хăйсем пĕлнипе мухтанса калаçатчĕç пысăккисем.

Пĕрремĕш хут эпĕ Йĕпреç районĕнчи Пысăк Упакассинче 1990 çулта пулнăччĕ. Кăçал нумаях пулмасть тепре кайса килтĕмĕр. Хусанти чăваш пукане театрĕн режиссерĕ, Чăваш Республикин Писательсен союзĕн членĕ В.С.Бисякова çак ялта çуралса ӳснĕ. Вăл пирĕн "Аттил" издательство кăларнă кĕнекесене тăван шкулне парнелес терĕ.

Упакасси С.В.Элкер ялĕ пулни кашни утăмрах курăнать. Шкулĕ поэт ячĕпе хисепленет. Шкул умĕнче питĕ хитре палăк. Кунтах С.В.Элкер музейĕ. Тĕлĕнмелле чаплă, пуян музей.

"Пирĕн яла С.В.Элкер упраса пурăнать, – теççĕ ял çыннисем. – Кирек мĕнле йывăрлăх пулсассăн та пуçлăхсемпе калаçнă чухне Элкер ятне асăнатпăр. Çакă пулăшать..."

Элкер ячĕ, чăнах та, яла çити çул тума та, клуба тытса тăма та, шкула упрама та пулăшни çинчен питĕ савăнса каласа пачĕç ял çыннисем.

7.

С.В.Элкер пирĕнтен уйрăлса кайсан çырнă сăввăма эпĕ çак йĕркесемпе вĕçленĕччĕ:

*Кашни поэт тăван пек,*
*Тăван пек те пичче пек.*
*Анчах Элкер пирĕншĕн*
*Тăван атте пекехчĕ...*

С.В.Элкер пирĕншĕн, ун хыççăн литературăн асамлă пахчине пырса кĕнĕ çыравçăсемшĕн кăна мар, кашни чăваш çыннишĕнех яланах тăван атте пекех пулнă. Паян та çаплах. Унпа тĕл пулни, унпа калаçни яланах асра. Поэтăн кашни сăмахне ĕнер кăна калаçнă пек ас туса тăратăп.

■ **Юхма МИШШИ,**
**Чăваш халăх писателĕ**

• *Премьера*